**Анатолий ЮМАН**

# ВЛАДИМИР САДАЙ: МАЛТАНХИ УТĂМСЕМ

2006 çулхи мартăн 31-мĕшĕнче чăвашсен паллă прозаикĕ, СССР Оборона министерствин литература премийĕн лауреачĕ Владимир Садай (Владимир Леонтьевич Цырульников) пурăннă пулсан сакăр вуннă тултармаллаччĕ. Питех те шел, вăл çак çула пурăнса çитеймерĕ, 1991 çулхи июлĕн 22-мĕшĕнче вăхăтсăр çĕре кĕчĕ. Ун чухне писатель 65-ре пулнă.

В.Садай Ульяновск облаçĕнчи Пухтел (халĕ Чăнлă) районĕнчи Каша ялĕнче çуралса ӳснĕ. Унăн çамрăклăхĕ Тăван çĕршывăн аслă вăрçи çулĕсемпе тӳр килнĕ. Пулас çыравçă аллине пăшал тытса фронта тухса кайнă. Вăрçă çулĕсем ăна Инçет-Хĕвел тухăçнех илсе çитернĕ. Çав асран кайми кунсем çинчен вăл каярах «Летчиксем» романĕпе «Аттесемпе пĕрлех кăвакартăмăр» дилогийĕнче, повеçĕсемпе калавĕсенче сăнарлăн çырса кăтартнă. (Писателĕн пултарулăх еткерĕнче сахалтан та 30 кĕнеке).

1949–1951 çулсенче Владимир Леонтьевич районта тăван чĕлхепе тухса тăнă «Пĕрлешӳллĕ ĕç» хаçатра ĕçлерĕ. Эпĕ унпа шăпах çав çулсенче паллашнăччĕ те. Паллашасси-мĕнĕ çапларах пулса тухрĕ. Вăрçă хыççăнхи çулсенче район хаçатне Ирсел чăвашĕ, вăрçăччен те кунта ĕçленĕ М.И.Нюдеев пĕччен кăларса тăратчĕ. Икĕ полосаллă хаçат эрнере пĕр хутчен тухса тăратчĕ. Çапах та ку ĕçе пĕччен туса пыма çăмăл пулман. Штатра тепĕр сотрудник тытса тăма май пулнă – яваплă секретарь. Анчах çак ĕçе тума пултаракан çын районта тупăнман. (Ун чухне журналистсене аслă шкулсенче ятарласа хатĕрлемен ĕнтĕ.) Аптранă енне вăл мана, тин çеç çичĕ класс пĕтернĕ çул çитмен çамрăка, ĕçе чĕнсе илчĕ. (Унччен маларах вăл манăн «Колхоз такмакĕсем» ятлă малтанхи сăвва çапса кăларнăччĕ. Аттен çамрăк чухнехи юлташĕ пулнăран вăл пирĕн çемьене лайăх пĕлнĕ.) Анне хирĕçлемерĕ. Часах эпĕ хаçат çынни пулас ĕмĕтпе район центрне тухса кайрăм. Ĕçлессе хутман пӳлĕмре, çиелти тумтирпех ĕçлеттĕмĕр. Ман çире – кивĕ фуфайка, алра – килте çыхнă çăм алсиш. Редактор черетлĕ номере кăларса ярать те командировкăна каять, 3-4 кун редакцие пырса та пăхмасть. Ытларах тăван ялне кайса çӳрет. Унта унăн çемйи, ачи-пăчи. Çак хушăра эпĕ редакцие килекен çырусене регистрацилетĕп, кирлĕ пулсан вĕсене пичете хатĕрлетĕп, ку е вăл пуçлăх патне мерăсем йышăнма яратăп, хам та тĕрленчĕксемпе корреспонденцисем çыратăп. Шел пулин те, хваттер йывăрлăхĕсем пирки вăрах ĕçлесси пулмарĕ. Çу кунĕсенче вырăнти колхозра тăрăшнă хыççăн кĕркунне ялтан 20 çухрăмра вырнаçнă Вăта Тимĕрçенти вăтам шкула вĕренме кĕтĕм. Шăпах 1949 çулхи çу кунĕсенче, бригадăри хĕрарăмсемпе вир çумлама çӳренĕ вăхăтра, кĕтмен çĕртен райхаçат редакцийĕнчен çыру илтĕм. Кĕске те ăшă çыру. Унăн авторĕ мана хаçата çĕнĕ япаласем çырса тăма ыйтать. Аяла «Владимир Садай» тесе алă пуснă.

Ку ята эпĕ унччен те пĕлнĕ-ха. Вăрçă çулĕсенчех райхаçатра унăн сăввисем курăнкалатчĕç. Халĕ акă, çартан тавăрăннă хыççăн, ăна редакцие ман выр-

ăна ĕçе илнĕ-мĕн. Калавĕсемпе очеркĕсем кашни номертех пичетленме пуçларĕç. Сăвăсем те çапса кăларать вăл. Çакăн хыççăн эпĕ те хавхаланса тепĕр хут ял хыпарĕсене пĕлтерсе тăма пуçларăм. Хушăран сăвăсем те ярса паратăп. Çамрăк писатель мана хавхалантарсах тăрать. Çырусене хуравламасăр хăвармасть, çĕнĕ ĕçсем хушать, ыр канашсем парать. Сăвă теники таранах ăнлантарса çырать. Май пур чух ман çырусене тĕкĕнмесĕр те, эпĕ мĕнле çырнă çаплипех пичетлет. Çырăвĕсенче хăй çинчен асăнма та манмасть. «Роман тăватăп», – тесе пĕлтерсех тăрать. (Романĕ 1951 çулта «Тăван Атăл» журналăн 1-мĕш кĕнекинче çапăнса тухрĕ.) Çав çырусем манăн килти архивра йышлăн упранаççĕ. Писатель çуралнăранпа 70 çул çитнĕ ятпа эпĕ вĕсене хăй ĕçленĕ «Ялав» журналта пичетлесе кăларнăччĕ.

Халĕ 1949 çулах таврăнатпăр. Чылай хушă çырусем çӳретнĕ хыççăн та пĕр-пĕринпе тĕл пулса паллашайманччĕ-ха. Пĕррехинче вăл яла хирте çум çумлакан колхозницăсем патне те пырса кайнă. Анчах вăл кун эпĕ унта пулман. Питĕ ӳкĕнтĕм вара. Кĕркунне, çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçлансан, В.Садай Вăта Тимĕрçен ял клубĕнче çамрăксемпе тĕл пулу ирттернĕ. Эпĕ вара çав канмалли кун интернатра пурăнакан ытти ачасемпе пĕрле тăван яла таврăннăччĕ. Ку хутĕнче те телей пӳрмерĕ тĕл пулма. Эпĕ вара райцентра ятарласа кайрăм ун патне, редакцие хамăн çĕнĕ япаласене илсе пытăм. Çавăн чух пĕрремĕш хут куçа-куçăн тĕл пулса калаçма тӳр килчĕ.

1950 çулта районта малта пыракан «Волна» колхоз председателĕ (вăл Цырульниковсен тăванĕ те пулнă иккен), В.Садай тата эпĕ – виççĕн облаçри ĕçялкорсен слетне кайса килнĕччĕ. Виçĕ куна тăсăлнă пуху делегачĕсен шутĕнче хăна çуртĕнче пĕрле выртса пурăнтăмăр.

Часах райхаçат редакторне ентешĕсем колхоз председательне суйларĕç. Хаçата вара ун вырăнне В.Садай алă пусса кăларма пуçларĕ. Ăна вăл та пĕччен кăларса тăратчĕ. Владимир Леонтьевич ĕçленĕ вăхăтра хаçат сăн-сăпачĕ те улшăнчĕ, содержанийĕ те пуянланчĕ, чĕлхи те лайăхланчĕ, çивĕчленчĕ.

«Летчиксем» роман çапăнса тухсан пирĕн кумир часах Шупашкара куçса кайрĕ. Вăтам шкул пĕтернĕ хыççăн, 1952 çулта, унăн эстафети мана куçрĕ. Кун хыççăн та пирĕн çыхăну татăлман. Эпир пĕр-пĕрин патне çырсах тăнă. Писатель район пурнăçĕпе кăсăклансах тăратчĕ. Райхаçат номерĕсене те ярсах тăнă эпĕ ун патне. Кĕнекисем çапăнса тухмассерен кун çинчен вулакансене пĕлтернĕ, калавĕсемпе очеркĕсене хаçатра пичетлесех тăнă. Шупашкара пырса тухсан та час-часах ун патĕнче чарăнса çĕр каçаттăм.

Владимир Садайăн Димитровградра ĕçлесе пурăннă тантăшĕ, пирĕн пĕрлехи тус Яков Рогачев писателĕн «пĕчĕк пичетре» тухнă япалисене, хăй патне ярса панă ал çырăвĕсене, редакцирен илнĕ çырăвĕсене типтерлĕн пухса çĕлесе пынă. Хуплашки çине «Владимир Садай. Малтанхи утăмĕсем. Çыравçăн малтанхи сăввисемпе калавĕсем» тесе çырнă.

Хăй вилес умĕн Яков Рогачев çак паха документсене ман пата ярса пачĕ. Акă мĕн çырса пĕлтернĕччĕ вăл кун пирки:

«Манăн килти библиотекăра ятарласа уйăрнă çӳлĕк пур. Унта хама лайăх пĕлекен писательсемпе поэтсен асăнмалăх алă пусса панă парне кĕнекисене вырнаçтарнă. Парне кĕнекисем хушшинче Мускавра пурăнакан Анатолий Жуков, Владимир Разумневич писательсен, Евгений Долматовский поэтăн, Ленинград писателĕн Александр Лебеденкăн, Чăваш халăх поэчĕсен Стихван Шавлин, Ух-

сай Яккăвĕн, Карели халăх писателĕн Антти Тимоненăн, Порфирий Афанасьевăн, Юхма Мишшин произведенийĕсем пур. Уйрăмах Николай Евстафьевăн, РСФСР Патшалăх премийĕн лауреачĕн Николай Благов поэтăн, Владимир Пырков, Евгений Ларин, Анатолий Юман поэтсен кĕнекисем йышлă. Çав кĕнекесем (вĕсен шучĕ çĕртен те иртнĕ ĕнтĕ) кашниех хăйне евĕрлĕ хаклă маншăн.

Акă Владимир Садайăн «Чи çывăх çын... эсĕ пулнă иккен». Ун хуплашки çинче – автор çырнă сăмахсем: «...авалхи тусăма юратса». «Çĕр. Тата çын» кĕнекине писатель çак сăмахсемпе парнеленĕ: «... авалхи тусăма, салтакра чух хавхалантарса, çунат, вăй парса тăнă юлташа – сывлăх, телей, творчествăра ăнăçлăх сунса. В.Садай».

Çак сăмахсене вуласан хĕрĕхмĕш çулсен пуçламăшĕ аса килет. Эпĕ ун чухне, вăрçă пуçланнă çул çеç çичĕ класс пĕтернĕскер, Чаллăпуç районĕнчи (çав çулсенче вăл, Пухтел районĕ пекех, Куйбышев облаçне кĕретчĕ) «Ленин çулĕпе» хаçат редакцийĕнче ĕçлеттĕм. Хаçата Кашара çуралса ӳснĕ, Пухтел хаçатĕнче ĕçленĕ Александр Жиров-Кашари журналист, манăн хаçат ĕçĕнчи малтанхи вĕрентекенĕм, редакцилетчĕ. Пĕррехинче, 1943 çулхи çуркунне, Владимир Цырульников хăйĕн паянхи кун темипе çырнă вирлĕ те янăравлă такмакĕсене ярса панăччĕ. Ытлашши шухăшласа тăмасăрах такмаксене кун çути кăтартрăмăр. «Вл.Садовский» тесе алă пуснăччĕ çамрăк автор хăйĕн такмакĕсен айне. «Садай» тесен чăвашларах пулмĕ-ши?» – тенĕччĕ вăл хăйĕн тепĕр çырăвĕнче. Эпир пулас писателĕн литературăри çак хушаматне ырларăмăр, малашне «Ленин çулĕпе» хаçатра унăн сăввисемпе калавсем яланах «Владимир Садай» ятпа пичетленсе пычĕç. («Садай» псевдоним пирки эпĕ хамăн «Марине» поэмăра та çырнăччĕ. Тăванĕсем каланă тăрăх, пулас писатель Кунтивкаври çичĕ çуллă шкулта вĕреннĕ чухне А.Кăлканăн «Анисса» пьесинче Сатай ватă çын рольне вылянă. Çакăн хыççăн ăна хăйне те çапла чĕнме пуçланă. Ун чухнех вăл, Максим Горький пек, çӳçне вăрăм ӳстерсе шĕлепкепе çӳренĕ, çырасса та сас паллисене унашкал шăрçа пек тирсе çырнă...)

Майĕпен-майĕпен Владимир Леонтьевич пысăк калăплă япаласемех çырма тытăнчĕ. Анчах та тăванĕсемпе тусĕсенчен аякра, Инçет Хĕвел тухăçĕнче, ют çĕршывра службăра тăнă чухне çырăвĕсемпе сăввисенче тунсăхлани те, кăмăл хуçăлни те палăркалатчĕ. Хăш-пĕр редакцисем çамрăк авторăн хайлавĕсем пирки вăхăтра хыпарламанни те тарăхтарнă пулас. Тантăш-тусăм патне ăсатакан çырусенче ăна май çитнĕ таран, хăй калашле, «хавхалантарма, вăй пама» тăрăшаттăм.

Каярах, Шупашкара куçсан, Владимир Леонтьевич кĕнеке хыççăн кĕнеке кăларма пуçларĕ. Унăн кĕнекисем Мускавра та вырăсла пĕрре кăна мар тухрĕç. Чăвашсен паллă прозаикĕн хайлавĕсене украинла, тутарла, марилле тата ытти чĕлхесем çине куçарса пичетлерĕç. Пирĕн рольсем те улшăнчĕç вара. Владимир Леонтьевич мана, республика тулашĕнче пурăнса ĕçлекенскере, пĕрмаях хавхалантарса тăчĕ. Мана кăна-им, тата мĕн чухлĕ çырма пуçлакана пулăшман-тăр ятлă-сумлă писатель хаçат-журналсен редакцийĕсенче, кĕнеке издательствинче ĕçленĕ вăхăтра та, каярах – писатель-профессионал ĕçĕпе пурăнма пуçласан та...

В.Садайăн Яков Рогачев асăрханă перифери тунсăхĕ ятлă-сумлă çыравçăсемпе çӳретнĕ çырусенче те палăрать. Акă Çемен Элкер çамрăк автор патне 1945 çулхи майăн 19-мĕшĕнче çырнă çыру:

«Хисеплĕ Садай юлташ!

Сан çырăвусене илтĕм. Юлашки çырăвна (8.V.45) майăн 19-мĕшĕнче илсе вуларăм.

Иртнĕ çырăвăрсем пирки те ответ янă пек астăватăп. Эсĕ пĕрмаях ответ çырмаççĕ тесе кӳренетĕн. Альманах редакцинчен Уяр Хв. (Афанасьев) пĕр уйăх каярах çырса янă тесе ĕнентерчĕ. Унччен маларах, хĕлле, е кĕркунне (?!) Тукташ та çырнă терĕ. Пирĕн те вăхăт сахал ĕнтĕ. Кунта литература ĕçĕпе редакцисенче ĕçлекенсем сахал-çке-ха. Ĕлĕк, вăрçăччен, виç-тăватă çын ĕçленине халĕ пĕччен туса пыма тивет. Пушă вăхăт юлмасть.

Шупашкарта халĕ чăвашла хаçат пĕр «Чăваш коммуни» кăна тухса тăрать, вăл та 2 страницăпа (полосапа) çеç. Журналсем тухмаççĕ. Пĕр «Тăван Атăл» альманах кăна 3 уйăхра пĕрре тухать. Пурне те пичетлесе кăларма, паллах, унта вырăн тивĕçмест. Çавах та Эсир çырнисенчен лайăх япаласем пулсан, ăна альманахра пичетлесе кăларма пулĕччĕ. Лайăх япалана, вăл пур енчен те пичете юрăхлă пулсан, пичетлемесĕр тăмĕç. Эсĕ ун пек ан шутла. Ярса пана произведенийĕсен çитменлĕхĕсем пулех çав. Эсĕ тата Болгари, Молдави çинчен çыратăн. Унти пурнăçсене лайăх пĕлетĕн-им вара? Мĕн пирки кунти пурнăç çинчен, чăваш пурнăçĕнчи паллă ĕçсем çинчен çырмастăн-ха?

Шупашкарта пурăнакан писательсем (Ĕçхĕл, Уяр, Иван Мучи, Кăлкан, Тукташ, Шавлы, Малгай, Саламбек, П.Осипов, Максимов-Кошкинский, Л.Агаков) пурте пысăк япаласем çырчĕç. Ку пысăк произведенисене вĕсем Чăваш республики 25 çул тултарнă ятпа пулнă конкурса тăратрĕç. Конкурс срокĕ июнĕн 1-мĕшĕнче пĕтет. Кам мĕнле преми илесси паллă мар-ха.

«Сунтал» тухмасть. Килес çул, çĕнĕ çултан тытăнса, тухмалла тăвĕç, тен.

Хусанкай Бакура госпитальре 6 уйăх ытла выртрĕ. Ури йывăр суранланнă. Халĕ сывалнă ĕнтĕ, кĕçех Шупашкара килмелле вăл. Ухсай, Алагер, Алга фронтрах. Халăх поэчĕ Шелеби Н.И. январĕн 12-мĕшĕнче 1945 ç. вилчĕ. Писательсем – Данилов-Чалтун, Бараев, Ястран, Усли В., Петтоки, Çитта Хв. фронтра вилчĕç. Ивник Ив. 1942 çулта чахоткăпа вилчĕ.

Митта П-пе Янгаса вăрçă пуçланнă кунсенчех темле айăппа тытса хупрĕç. Чĕрĕ-и, вилĕ-и вĕсем – паллă мар. Уйăп Мишши Мускавра, Хĕрлĕ Çар ретĕнче тăрать.

Эпĕ Чăвашиздатра ĕçлетĕп.

Часрах сывал. Вăрçă пирĕн çĕнтерӳпе чарăнчĕ. Каллех илемлĕ, ырă пурнăç пуçланса кайĕ. Çавăнпа та халĕ салхулланма кирлĕ мар. Пурнăç çине паттăр чунпа (...пăхмалла!). Ан сӳтĕклен.

Хисеплесе – Элкер.»

Акă Хветĕр Уяр çырăвĕ:

«3.V.1945.

Садай юлташ!

«Енчĕк» текен калавна тата икĕ сăввуна илсе вуларăм. Калавĕ самаях аван вуланать. Чĕлхи те пĕртте япăх мар. Анчах усă курасси пирки ним калама та аптратăп. Альманахăн кăçалхи номерĕсем тахçанах производствăра. Çитес çулхине 1946 ç. март уйăхĕсĕр те хатĕрлемелле мар. Тата калавĕ хăй те (калăпăшĕ енчен те, илемлĕхĕсене илсе пăхсан та) ытларах хаçатра килĕшӳллĕ пулмалла. Кунта та чăрмав пур: хаçачĕ пĕчĕккĕ. ТАСС материал-

ĕсене те ниçта чикме аптраççĕ. Ку ĕнтĕ вăл пур çĕрте те пĕр пек. Тепрер çултан майлашать пуль-ха та вăл.

Çырма пултаратăн эсĕ, кăна эпĕ шантарсах калатăп. Санăн тӳсĕм те, ĕçлес кăмăл та çителĕклĕ пулас.

Манăн сана сăвăсем мар, ытларах прозăпа çырма сĕнес килет.

Ку сăввисене пăхса тухма эпĕ С.В.Эльгере патăм. Эпĕ поэт мар та, сăвăсене питех ăнланмастăп пулас.

Çапла, Садай юлташăм. Капăр-капăрах пичетлеме май çук пулсан та, ытларах çырма тăрăш. Писатель ĕçĕнче хăнăху питĕ кирлĕ япала.

Салампа – Хветĕр Уяр.»

«Ялав» журналта ĕçленĕ М.Хури çапла хуравланă:

«Октябрĕн 10-мĕшĕ, 1947 ç.

Садай юлташ!

Эсир Шупашкара килсен хăварнă тетрадьри «Атăл тӳпинче» калава çак çулхи номерсенчен пĕрне яратпăрах пулас. Пуринчен ытла ӳкерчĕксене витĕмлĕ тума тăрăшни савăнтарать. Çав калавпа хавхаланса Сире малашне сăвă çырассине иккĕмĕш вырăна хăварсах калавсем çырас енĕпе ĕçлеме сĕнес килет. Çав тетрадьри калавсемпе сăввусене танлаштарсан калавусем темĕн чухлĕ вăйлăрах тухни курăнать. Пичете яма хатĕрлес пирки ĕçлеме пуçăннă пулин те Сиртен çав калавăн тĕп тĕллевне, ăна мĕн калас тесе çырнă тĕллевне пĕлтерме тăрăшсан аванччĕ.

Салам. М.Хури.»

Литературăри ӳсĕмсем палăрма пуçласан В.Садая Шупашкара куçса каяс ĕмĕчĕ канăç паман. Çакă В.Урдаш çырăвĕнче уçăмлăн сисĕнет:

«Улатимĕр, тусăм!

Санăн çырăвусене, сăн ӳкерчĕксене илтĕм. Питĕ савăнтăм. Çыру ярайманшăн каçар ĕнтĕ, унта-кунта сыпкаласа çӳресех вăхăт иртсе кайрĕ. Малашне час-час çырăпăр.

Ху пĕлен вĕт-ха, эпĕ пĕччен çын. Хĕлле хулара пурнаймарăм, çулла мĕнле пулĕ. Алăсем çукки чăрмантарать мана. Нимĕн тума та пултараймастăп. Çакăнта, хулара эсĕ пулсанччĕ, пĕрле пурăннă пулăттăмăр. Пӳрт-çурта йĕркелесе ярăттăмăр. Мĕншĕн халĕ те ямаççĕ Сире?

Хăвăртрах кил-ха, атту ĕмĕр иртет вĕт.

Ехрем Иванĕ пĕлтĕр кĕркунне вилчĕ. Мĕнле вилни çинчен пĕлес килсен каласа парам. Ресторанра ĕçсе ларнă, те çапса пăрахнă, те хăех вилнĕ, пĕлместĕп. Виллине ирхине ресторан умĕнче тупрăмăр. Хура ĕç.

Эсĕ кайнăранпа иккех калав пичетлерĕм-ха. Пурнăç япăх пирки çыраймастăп. Халĕ тата 3 калав хатĕрлесе çитересшĕн те-ха, мĕнле пулĕ.

Çыр. Сахал çырнăшăн ан çиллен. Кăмăл начар. Настроени пăсăлнă вăхăт. Салампа Валентин.

Апрелĕн 3-мĕшĕ. (1947)»

Хамăн асаилĕвĕме «Летчиксем» роман авторне халаллана сăвăпа вĕçлес килет:

# КĔПЕР

Пирте «тете» тесе чĕнеççĕ
Çулпа кăшт аслă арçынна.
Эс килнĕ чух эп ача çеçчĕ, –
Илсе вуларăм çырăвна.

Хай Максим Горький çырнă тейĕн:
Сас паллисем çапла çавра;
Ик-виçĕ ăш сăмах хĕлхемĕн
Вут чĕртрĕ манăн кăкăра.

Çулу çапса кăларнă евĕр
Ку пулчĕ чĕрĕлӳ – хĕлхем.
Хаçат çынни кăна-и – чимĕр! –
Çапаканни – чăн-чăн этем.

Тивсен кама вăл тĕк хăварĕ,
Чăваш чĕлхи, кăвар чĕлхе?
«Садай...» Ятне те илтнĕ мар-и,
Палламасан та хальлĕхе.

Çапла... Райхаçатра вуланă
Сайра-хутра çырнисене.
Каша ачи-мĕн шăрантарнă
Çав ятпала сăввисене.

Сарать халь çунатне çав кăйкăр,
«Роман тăватăп», – тет мана.
Шăп çавăн чух курсассăн акă
Санра палларăм тăвана.

Çап-çамрăк питлĕ-куçлă, хӳхĕм...
Çыру сĕтелĕ хушшинче
Лараттăн эс. Вăй-хал та тӳсĕм
Тапса тăрать. Эс ху – тĕнче.

Çунаттусем сана çĕклерĕç
Сенкер тӳпе таран, инçе.
Сăну асран тухма пĕлмерĕ,
Яту çаплах чĕлхе çинче.

Кунсем-çулсем... Аса илсессĕн
Ĕнер йалт пулнăн туйăнать.
Куçун, таса тӳпе пек, тĕсĕ,
Чуну та – тĕпсĕр яланах.

Кун-çул пулать пылак е йӳçĕ,
Çапла вăл пурнăçра чăнни.
Салтак, çар летчикĕ, ертӳçĕ,
Врач, медсестра, суха çынни, –

Яш çын-и е сухаллă ватă,
Чипер пике – çук кам кăна!..
Эс тунă сăнарсем... Куратăп
Эп вĕсенче сан кăмăлна.

Аннепеле Тăван çĕршывшăн
Кĕрешекен салтак иккен
Чăн паттăр. Пурнăçне çут куншăн
Памашкăн хатĕр вăл хитрен.

Эс килтĕн – кайрăн, ма пит хăварт?
Пулни самантлăх туйăнать.
Сана эп халаллатăп сăвă,
Манра эс чĕртнĕ вут çунать.

Ентешӳсен таланчĕ-терчĕ
Тĕрленчĕ прозăра чипер.
Ăна çĕн тапхăра çитерчĕ
Эс хывнă чĕнтĕрлĕ кĕпер.